Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 142 (4711) *1998 çулхи декабрь (раштав) уйăхĕн 12-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

Уяв ячĕпе сире, нурлатсемпе хăнасем!

НУРЛАТ

# Декабрĕн 12-мĕшĕ - Хула кунĕ

Пирĕн района ĕçлĕ визитсемпе тĕрлĕ делегацисем килкелесех тăнине нурлатсем хăнăхнă ĕнтĕ. Нумаях пулмасть килнĕ делегаци хушшинчи пĕр хăна çапла палăртрĕ: "Хулана кĕриччен ĕçлекен 13-14 строительство кранне курма ĕлкĕртĕм. Апла пулсан строительство пырать, хула ӳсет..." Юлашки çулсенче çĕкленнĕ объектсене хăйĕн куçĕпе курсан, вăл тата та тĕлĕнчĕ пулĕ. Эпир, нурлатсем, вĕсемпе мăнкăмăлланатпăр, малашне çене, тата та масштаблăрах стройкăсем пуçланасса шанатпăр. Крансен стрелисем çакна çирĕплетеççĕ. Акă вĕсенчен пĕри хулана кĕнĕ çĕрте, шалти ĕçсен пайĕн çĕнĕ çурчĕ умĕнче курăнать. 1296 вĕренекен вырнаçмалăх тăвакан шкул умĕнчи площадкăра вĕсем виççĕ, кăшт аяккарах, пурăнмалли çуртсем çывăхĕнче тата иккĕ курăнаççĕ. Строительство ĕçĕсем хулан çурçĕр пайĕнче те, кăнтăр енĕнче те хĕрсе пыраççĕ.

## Нурлат çийĕн кран стрелисем курăнаççĕ


Искусствăсен шкулĕ


Çамрăксен центрĕ


Аэропорт





ГРОВД çĕнĕ çурчĕ


Тĕп площадь


Пулас шкул

## *Çулталăк программине - срокчен*

**Газификаци - кун йĕркинчи задача**

Газовиксем хăйсен сăмахне тытнă: газификацилес ĕçĕн çулталăк программине срокчен - 11 уйăхра пурнăçланă.

Уйрăммăн илсен, 125,8 километр газопровод хута янă, ку планпа палăртнинчен 6 километр ытларах. Поселоксем хушшинчи газопровода та планран ирттерсе хывнă. Çак тапхăрта 2528 çуртпа хваттере газ кĕртнĕ. Çулталăк кăтартăвĕсемпе республикăра пирĕн района çитекенни çук. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, кăçал 1,5 хут ытларах газ пăрăхĕсем хывнă, газ кĕртнĕ çуртсен шучĕ 2 хут ӳснĕ. Çулталăк вĕçлениччен тата 500 хваттерпе çурта çутçанталăк газĕ кĕртĕç тесе çирĕппĕн калама пулать. Газовиксем çапла шантараççĕ. Газификаци ĕçĕсен чи пысăк пайне "Востокмонтажгаз" тата "Газпромстрой" акционер обществисем, Димитровград хулинчи 14-мĕш номерлĕ МСУ пурнăçланă. Вĕсенчен пĕрремĕшĕ газ пăрăхĕсем хывмалли плана 160 процент тултарнă, газификациленĕ хваттерсемпе çуртсен 70 процентне вĕсене тивет.

## УЯВ ТУМĔПЕ НУРЛАТ ПИТĔ ИЛЕМЛĔ

"Хула кунĕ" уява хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен йĕркелӳ комиссийĕ малтанхи итогсене пĕтĕмлетрĕ. Мĕнрен тĕлĕнмелли пур вĕт! Икĕ-виçĕ кун хушшинче Нурлат сăн-сăпачĕ çав тери улшăнчĕ. Сахăр завочĕн коллективĕ аэропортăн тата хулан тĕп площадьне илемлетнĕ, сахăр вĕретекенсем хăйсен администраци çуртне те питĕ хитре капăрлатнă. Нефтебаза, апат-çимĕç комбиначĕ, 127-мĕш ПМК, ДРСУ, чугун çул ОРС уяв тумĕпе илемленнĕ. Хулари шкулсем, ача-пăча учрежденийĕсем тĕрлĕ çутăсемпе ялтăртатаççĕ. Хулана уяв сăн-сăпачĕ кӳрессипе МПП пысăк ĕç пурнăçлать: ялавсем, гирляндăсем çакаççĕ, елкăсем вырнаçтараççĕ, юрăн хуласем тăваççĕ...

Пĕтĕмĕшле итогсене пĕтĕмлетиччен вăхăт пур-ха, çавăнпа та хулари "визажистсем" тем те шухăшласа кăларма пултараççĕ.

Ăнăçлăхсем сире тата çĕнтерӳ!

**Хаçатăн çитес номерĕ кĕçнерникун, декабрĕн 17-мĕшĕнче тухать.**

# Ӳс, çамрăклан, чечеклен, Нурлат!

## Ĕçсем йĕркеллĕ пыраççĕ

"Татавтодор" пĕрлешĕвĕн Нурлатри ДРСУ хăйĕн территорине Çĕнĕ çул уявĕ тĕлне пĕрремĕшсен шутĕнче питĕ илемлĕ капăрлатнă. Ку хула хĕрринче вырнаçнипе кăна мар, кунти ĕçсем йĕркеллĕ пыраççĕ. Хальхи йывăр вăхăтра та вĕсем çулсем юсамалли плансене ăнăçлă пурнăçлаççĕ. Çул-йĕр тăвакансен ĕç результачĕсене районти тĕрлĕ кĕтессенче курма пулать. Сăмахран, Нурлат-Тĕкĕрмел-Салтакъел çулĕн 9,5 километрне икĕ сий асфальт хунă. Нурлат-Чистай трассăри 14 километр çула тĕпрен юсанă. Çаплах вĕсем "Сельхозтехника", хресченсен хуçалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн, Нурлат-Октябрь элеватор территорийĕсене асфальт сарнă.



Управленире чи лайăх ĕçченсен ячĕсене мăнкăмăлланса асăнаççĕ. Кусем вĕсем асфальтпа бетон хывакан бригадăра вăй хуракансем Анатолий Николаевич Смирновпа Петр Семенович Улаев, КамАЗ водителĕсем А.Коноплинпа К.Субханкулов, катоксен машинисчĕсем Ф.Валимухамметовпа З.Ахметов, машинист-асфальтоукладчик Ф.Мухамметов, вĕсем çул-йĕр тăвассинче чылай опыт пухнă.



ДРСУн иккĕмĕш çул ĕнтĕ хăйĕн теплици пур. Кунта Минзифа Зиятдинова ĕçлет, вăл питĕ тăрăшуллăскер, теплицăра пахча çимĕç, тĕрлĕ техĕмлĕ курăксем акса ӳстереççĕ. Управленире кăçал хăйсен кафе-магазинне туса пĕтереççĕ, вăл кунти ĕçченсене кăна мар, ыттисене те тивĕçтерĕ.

ДРСУ коллективĕ çапла ĕçлет тата пурăнать, халь çул-йĕр тумалли сезон вĕçленнĕ пулин те, ĕç малалла пырать: материалсем хатĕрлеççĕ, строительство ĕçĕсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ çула пысăк шанăçпа кĕтсе илеççĕ.

**С.НУРУЛЛИНА.**

**Н.Азизов ӳкерчĕкĕсенче: кантур тата кафе-магазин.**



## Коллектив тата унăн канăççăр ертӳçи

*7-мĕш номерлĕ "Сказка" шкул-ача-пăча сачĕ 10 çул ытла ĕçлесе, районти чи лайăх ача-пăча учрежденийĕсенчен пĕри пулса тăнă. "Сказка" ача-пăча сачĕ хăйĕн пурлăх базипе, çутçанталăк кĕтесĕпе, театр тата художество студийĕсемпе, тăван кĕтес музейĕпе, питĕ хитре илемлетнĕ кабинетсемпе тата ыттипе чăннипех мăнкăмăлланма пултарать. Мĕнпур ĕçсен пуçаруçи вара коллектива çак ача-пăча садне уçнăранпах ертсе пыракан Римма Гареевна Карымова шутланать. Çак çулсенче кунта çирĕп те пуçаруллă коллектив йĕркеленнĕ. "Сказка" хулари ача-пăча учрежденийĕсен тĕкĕрĕ пек, вăл района ĕçлĕ визитпа килекен хаклă хăнасене тараватлăн кĕтсе илет.*

*Кăçал вара тата та çӳлерех çĕкленнĕ: "Сказка" шкул-ача-пăча сачĕ 1998-1999 вĕренӳ çулĕ тĕлне хатĕрленес тĕлĕшпе пуçламăш шкулсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Учительсен августри канашлăвĕнче хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕ заведующие тата вăл ертсе пыракан коллектива тунă ăнăçлăхсемпе саламланă, Р.Г.Карымована Хисеп грамоти панă. Пирĕн фотокорреспондент Н.Азизов ăна шăп кăна çав вăхăтра ӳкерсе илнĕ.*



## Хĕл Мучи парнисем



Банк системинче кризис мĕнле çивĕчленсен те "Девон-Кредит" банк кăçал та хăйĕн çамрăк вкладчикĕсене пĕрремĕшĕсен шутĕнче Çĕнĕ çул парнисем панă. Анчах та юлашки вăхăтра вăл регионри тĕреклĕ банксен хушшине кĕнине шута илсен, кунтан тĕлĕнмелли çук. Раççейри Центробанкăн даннăйĕсем тăрăх, "Девон-Кредит" чи пысăк 100 банк хушшинче тăваттăмĕш вырăн йышăнать.

Ача-вкладчиксен шучĕ кăçал тата та ӳснĕ, 50 тенкĕлĕх парне пуххисене (ку Мускаври "Бабаевская" кондитер фабрикин продукцийĕ) пурĕ 265 ача илĕ. Банк филиалĕн управляющийĕн Н.Г.Салахован сăмахĕсем тăрăх, ĕçлеме пуçланă пĕрремĕш кунранах практика илнĕ çак ырă акцие вĕсем халь хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Тепĕр енчен вара, банк хăйсен пулас клиенчĕсене халех хăйне евĕрлĕ воспитани парать. "Ачасем парнесем илме мăнаçлăн килни пирĕншĕн кăмăллă, вĕсем питĕ савăнаççĕ", - тет Нурзия Габдрахмановна.



## Пултаруллăскер

*Паллашăр: "Лениногорскри тампонаж ĕçĕсен управленийĕ" ОООн Нурлатри филиалĕн шоферĕ Валерий Петрович Сидимиров. Вăл филиала НУРБăн автотранспорт цехĕнче нумай çул хушши вăй хунă хыççăн пынă. Пултаруллă, техника лайăх пĕлекен водитель автобуспа ĕçлет, вăл коллективра хăйĕн вырăнне тупнă. Валерий Петрович хăйне çирĕплетсе панă техникăна тăтăшах юсавлă тытнипе рейссене тухма яланах хатĕр. Ĕçчен шофера коллективра хисеплеççĕ.*

*Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*

## Тивĕçĕпе те, чĕри хушнипе те

Флюра Шайдуллина çинчен пурте ырласа тата хисеплесе калаççĕ: вăл - тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлакан çын. Вăл шутланă тăрăх, унăн характерĕн тĕп енĕсем - яваплăх, тӳрĕ кăмăллăх, çирĕплĕх - ашшĕ-амăшĕ пĕр вĕçĕмсĕр тăрăшнин результачĕ.

Эпĕ вара Флюрана вăл сутуçă пулса ĕçленĕ чухне тантăшĕпе пĕрле "Нефтяник" клубăн пултарулăх ушкăнне хутшăннă вăхăтранпах пĕлетĕп. Вячеслав Григорьевич Варламов ертсе пынă çав çулсенчи паллă ансамбль составĕнче вĕсем малтан тăваттăн юрлатчĕç, кайран - иккĕн.

Флюра качча тухсан та телейлĕ пулни палăратчĕ. Телейсĕр пулнине çынсем тӳрех кураççĕ вĕт. Шайдуллинсен çемйинче вара яланах пĕр-пĕрне ăнланнă, кунта хăтлăх, тирпейлĕхпе тасалăх хуçаланнă, вĕсем хăнасене хапăл туса йышăннă. Çемье пысăк та йывăр сухату тӳссен - мăшăрĕ тата ашшĕ вилсен те çак лару-тăру упранса юлнă. Флюра икĕ хĕрне пĕччен çитĕнтерчĕ. Халь вĕсем ӳссе çитĕннĕ ĕнтĕ, Флюрăн мăнукĕ пур, пушă вăхăтне яланах мăнукĕпе пĕрле ирттерет.

Паллах, пирĕн хĕрарăмсем килпе çемьесĕр пуçне урăх çĕрте те вăй хураççĕ. Эпир çынна унăн обществăри пĕлтерĕшне, ытти çынсене мĕнле усă панине тĕпе хурса хаклама хăнăхнă. Çакă вара кулленхи ĕç. Ку тĕлĕшпе Флюрăна ырă сунса ăмсанма çеç пулать. Акă вăл 15 çул ĕнтĕ районти çыхăну узелĕн коллективĕнче ăнăçлă ĕçлет. Почтăра пулнисем почта çыхăнăвĕн операторĕ Флюра Нургатовна Шайдуллина клиентсене яланах лăпкă, ырă сунса тивĕçтернине курнă ĕнтĕ. Вăл укçа куçарăвĕсене йышăнать, тӳлет, пенси, чексемпе жетонсем парать тата ытти ĕçе пурнăçлать.



Акă вăл компьютер хускатать, çакăнтах пенси шутлать, телефонпа калаçать, клиент ыйтни çине хуравлать, кирлĕ бланксем, конвертсем, открыткăсем парать. Кашни кун çапла. Хăшĕ-пĕри тĕлĕнет: ку çын автомат пулĕ. Эпĕ тата хушса калатăп: Флюра хăйĕн вырăнне тупнă. Вăл яланах явап тата тивĕç туйса ĕçлет. Вăл районти почта çыхăнăвĕн узелĕнчи чи лайăх та опытлă ĕçченсенчен пĕри шутланать. Унăн сăнӳкерчĕкне организацин Хисеп хăми çине вырнаçтарнă.

Эпир, пенсионерсем, Флюра Нургатовнан яланхи клиенчĕсем, ăна ырлăх-сывлăх, пурнăçпа ĕçре ăнăçлăхсем сунатпăр.

**В.КОМОЛОВ,**
**Нурлат хули.**

